23-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
СЕНТЯБРЬ
14
ЫТЛАРИКУН
183(6420) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 11-мĕшĕнчи оперативнăй сводка

Сентябрĕн 11-мĕшĕнче ПАВЛОГРАД енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, 10 километртан пуçласа 12 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 70 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра МИХАЙЛОВКА, КИСЕЛИ, ГУСАРОВКА, АСЕЕВКА, ШЕВЕЛЕВКА, БОЛВЕНКОВО, ЛОЗОВЕНЬКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене илнĕ.

СТАЛИНО хулинчен (Донбасс) хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, 10 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 40 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра УСПЕНОВКА, ЕЛИЗАВЕТОВКА, ЕКАТЕРИНОВКА, КОНСТАНТИНОВКА, ÇĔНĔ МИХАЙЛОВКА, ВАЛИРЯНОВКА, ИВАНОВКА, ОКТЯБРЬСКОЕ, КРАСНОВКА, ЧЕРДАКЛЫ ятлă пунктсене. ВЕЛИКО-АНАДОЛЬ, КАЛЬЧИК ятлă чугун çул станцийĕсене илнĕ.

НЕЖИН хули енче пирĕн çарсем, уйрăм участоксенче 6 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 20 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра СТРЕЛЬНИКИ, АСЛĂ ЗАГОВОРКА, КАРАБУТОВА, ЮРЬЕВКА, ПИКАРИ ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене тата ПЛИСКИ ятлă чугун çул станцине илнĕ.

БРЯНСК хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, 5 километртан пуçласа 10 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра КИВĔ ХОТМИРОВО, ÇĔНĔ ХОТМИРОВО, МАТРЕНОВКА, ИВАНОВИЧИ, БЫТОШ, АСЛĂ ЖУКОВКА, КĔÇĔН ЖУКОВКА, РОМАНОВКА, КОРОБИНО ятлă пунктсене илнĕ.

БРЯНСК хулинчен кăнтăртарахра пирен çарсем халăх пурăнакан темиçе пункта, вăл шутра ФРОЛОВКА, ГАВРИЛКОВО, ПРОЛЫСОВО, СЫТЕНКИ ятлă пунктсене тытса илнĕ.

ХАРЬКОВРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, 5 километртан пуçласа 8 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ.

СМОЛЕНСК енче пирĕн çарсем хăйсем йышăнса тăракан позицисене лайăхлатасшăн çапăçнă.

Сентябрĕн 10-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 46 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зениткăй артиллери тăшманăн 49 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Павлоград енче пирĕн çарсем малалла ăнăçлăн тапăнса пынă, халăх пурăнакан 70 пункта ытла тытса илнĕ. Тăшман высотасенче тата халăх пурăнакан çирĕплетнĕ пунктсенче чарăна-чарăна хирĕç тăрать. Пирĕн çамăллăн куçса çÿрекен отрядсем, нимĕçсен флангĕсене туха-туха, тăшмана питех те хăвăрттăн пыра-пыра çапаççĕ. Çавăрса илессинчен хăранипе гитлеровецсем пĕр йĕркесĕр каялла чакаççĕ. Пĕр участокра пирĕн боецсем тăшманăн 600 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ. 12 тупă тата тĕрлĕ грузсем тиенĕ 42 автомашинăна пĕтерсе тăкнă, 200 тонна горючи, продовольствин пысăк складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тепĕр участокра пĕр соединени чаçĕсем нимĕçсен 11 танкне пĕтерсе тăкнă, тепĕр пĕтĕмĕшпех юсавлă йывăр танкне, 10 тупă тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Кăнтăр фронтĕнчи çарсем, 15 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 40 пункта ытла тытса илнĕ. Пирĕн кавалеристсемпе моторизованнăй пехота, тăшманăн каялла чакмалли çулĕсене тыта-тыта илсе, нимĕçсен çыннисемпе техникине пĕтерсе пыраççĕ. Пĕр станцире 1000 çитти чугун çул вагонне тытса илнĕ, вăл вагонсенчен пĕр пайĕ çар грузĕсемпе пулнă. Çав станцие хÿтĕлекен нимĕç пехотин батальонĕн пысăк пайне пĕтерсе тăкнă, юлашкийĕсене тыткăна илнĕ. Пĕр кавалери чаçĕн боецĕсем çĕçен хирте нимĕç автоколоннине пÿлсе лартнă, боеприпассем турттарса пыракан 35 автомашинăна тытса илнĕ.

* * *

Нежин хули енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă. Пĕр соединени боецĕсем, нимĕçсем вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, малалла куçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта тата Плиски ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ. Плиски станцийĕшĕн пынă çапăçура нимĕç пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн тепĕр соединени чаçĕсем тăшман контратакине сирсе янă. Çав çапăçура нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ. 6 танк тата «Фердинанд» йышши хăй тĕллĕн çÿрекен 2 туппа пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 9 тупă тата боеприпассен складне тытса илнĕ.

* * *

Брянск хулинчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла, вăл шутра Бытош ятлă рабочи поселока, тытса илнĕ. Нимĕçсем ытти участоксенчен пулăшу куçарса пырса, çав поселока хытă хÿтĕленĕ. Пирĕн чаçсем Бытошран икĕ енĕпе те иртсе кайнă та, питех те хăвăрттăн пырса çапса, тăшмана ывăтса янă. Çапăçу хирĕнче нимĕçсен 700 вилли таран выртса юлнă. Пирĕннисем 5 тупă, 41 пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Харьковран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пырса çапăçнă. Тăшман çĕнĕ чаçсем илсе пынă та, контратакăсем тăва-тăва, пирĕн çарсем малалла куçнине чарма хăтланнă. Пĕр участокра гитлеровецсем кун каçиччен умлăн-хыçлăн 14 контратака тунă. Пĕр соединени боецĕсем нимĕçсен пур контратакисене те сирсе янă. Тăшманăн, вилнисене кăна шутласан та, 800 салтакпа офицер пĕтнĕ. Тепĕр участокра пирĕн пехотинецсемпе танкистсем тăшмана халăх пурăнакан темиçе пунктран хăваласа кăларнă. Çав çапăçусенче 400 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Смоленск енче пирĕн çарсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатасшăн çапăçнă. Ельня хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пĕр чаçри подразделенисем нимĕçсен вăйлă çирĕплетнĕ пунктне тытса илнĕ. Пирĕн боецсем тăшмана сывлăш çавăрса илмелĕх вăхăт та паман, юханшыв урлă каçса кайнă та халăх пурăнакан виçĕ пункта тытса илнĕ. Çав çапăçура гитлеровецсен икĕ ротине ытла пĕтерсе тăкнă. Артиллери батарейине, 54 пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Хĕрлĕ ялавлă Балтика флочĕн авиацийĕ тăшманăн 5000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Литовец партизанĕсен отрячĕ нимĕçсем çарсемпе боеприпассем куçарса тăракан шоссе çулĕ çинче 4 кĕпере сирпĕнтерсе янă тата тăшманăн 5 автомашинине сирпĕнтерсе янă, телефонпа телеграф линине темиçе километр тăршшĕнче татса пĕтернĕ. Литовец партизанĕсен тепĕр отрячĕ нимĕçсен икĕ çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Çав крушенире 60 вагонпа платформа çĕмĕрĕлнĕ. Чугун çулăн çак участокĕнче поездсем çÿресси вара темиçе кунлăха чарăнса ларнă.

* * *

Нимĕçсен 17-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 21-мĕш полкăн 11-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ фельдфебель Гергардт Рейнер çапла каласа панă: «Пирĕн полк Таганрогра тăратчĕ. Эпир хамăрăн кивĕ укрепленисене пĕрмаях лайăхлататтăмăр, çĕнĕ укрепленисем те тăваттăмăр. Салтаксене кунсерен 12—14 сехет ĕçлеттеретчĕç. Вырăс çарĕсем Орелпа Белгород хулисене илсе Харьков патнелле сыхарса пынине пĕлсе, пурте хуйха ÿкрĕмĕр. Часах пирĕн черет те çитрĕ. Вырăссем пире эпир кĕтмен вырăнтан пырса çапрĕç, вĕсем пирĕн çине тылран пырса кĕчĕç. Эпир хăраса ÿкнипе усă курса, вырăссем пире питех те хăвăрттăн çавăрса илчĕç те, эпир çирĕп унка кĕрсе ÿкрĕмĕр. Хирĕç тăни ăссăр ĕç пулнă пулĕччĕ, çавăнпа эпир тыткăна парăнтăмăр»,—тенĕ.

Юлашкинчен çак фельдфебель çапла каланă: «Чирленĕ май эпĕ вăрçăран киле отпуска кайса килтĕм. Отпуска эпĕ Швейгерн ятлă пĕчĕк хулара ирттертĕм. Иртнĕ çул çав хулари çынсем нумайĕшĕ Украинăра паха çĕрсем туянма шутлатчĕç. Хăшĕ-пĕрисем Российăна пурăнма кайма хатĕрленетчĕç. Халĕ ун пеккисем çине ухмаха ернĕ çынсем çине пăхнă пек пăхаççĕ. Халĕ фронтра вилнисем çинчен кăна калаçаççĕ. Июль уйăхĕнче пирĕн пĕчĕк çеç хулана Хĕвелтухăç фронтĕнче 350 салтакпа офицер пĕтни çинчен пĕлтерекен извещени килчĕ».

Сентябрĕн 12-мĕшĕнчи оперативнăй сводка

Сентябрĕн 12-мĕшĕнче пирĕн çарсем СТАЛИНО хулинчен (Донбасс) хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре çаплах наступлени туса пынă, 10 километртан пуçласа 30 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 50 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра Сталино облаçĕнчи КИВĔ КЕРМЕНЧИК ятлă район центрне тата АЛЕКСЕЕВКА, БОГАТЫРЬ, ÇĔНĔ УКРАИНКА, ПАВЛОВКА, ЕВГЕНОВКА, ÇĔНĔ ПЕТРИКОВКА, ÇĔНĔ КАРАКУБА, КĔÇĔН ЯНИСАЛЬ ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене илнĕ.

ПРИЛУКИ хули енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, уйрăм участоксенче 8 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 70 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра ГАДЯЧ хулине тата ЮШЕНКОВКА, АНРЕЕВКА, ГЕРАСИМОВКА, СТАРЫЙ, ПОГАРЩИНА, РОЗБИШЕВКА, КРАСНОЗНАМЕНКА, СЕРЕДНЯКИ, ПЕТРИВКА, КĔÇĔН БУДИША ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене илнĕ.

НЕЖИН хули енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, 10 километртан пуçласа 12 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 20 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра БЕРЕСТОВЕЦ, ПРОХОРЫ, СИВОЛОЖ, ХОРОШЕЕ ОЗЕРО, ИВАНГОРОД, ХВАСТОВЦЫ, ГРИГОРОВКА, КУРЕНЬ ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене илнĕ.

РОСЛАВЛЬ хули енче пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, 6 километртан пуçласа 8 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла тытса илнĕ. Вăл шутра БЕРЕЗОВКА, САДУЛИНО, ЛОГАЧЕВО, ВЕДЕРНИКИ, ВЕТИТНОЕ, ПОКРОВСКОЕ, ЗАБОЛОВКА, КОЖАНЫ, ЛАЗИНКИ ятлă пунктсене илнĕ.

БРЯНСК енче пирĕн çарсем наступлени туса пынă, уйрăм участоксенче 4 километртан пуçласа 6 километр таран малалла куçса, халăх пурăнакан 40 пункта ытла йышăнса илнĕ. Вăл шутра ОЛЬШАНИЦА, ПУПКОВО, БЕРЕЗИНА, ПАСТУШЬЕ, КĔÇĔН ПОЛНИНО ятлă халăх пурăнакан пунктсене тата БЕРЕЩЕЕВКА, БЕЛЫЕ БЕРЕГА (Брянскран 20 километр хĕвеланăçнелле), СТЕКЛЯННАЯ РАДИЦА ятлă чугун çул станцийĕсене илнĕ.

ХАРЬКОВРАН кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, 3—4 километр малалла куçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Вăл шутра ЛЕВАНДАЛОВКА, КОСТЕВ, ЛИТВИНОВКА ятлă халăх пурăнакан пысăк пунктсене илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн çарсем çапăçса разведка тунă тата тăшмана хирĕç артиллерипе минометсенчен персе тăнă.

Сентябрĕн 11-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 64 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зениткăй артиллери тăшманăн 28 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Сталино хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, малалла тапăнса пырса, халăх пурăнакан 50 пункта ытла тытса илнĕ. Тăшман, малтанах хатĕрлесе хунă оборона рубежĕсемпе усă курса, совет чаçĕсем малалла куçса пынине чарма хăтланнă. Пирĕн боецсем питех те хăвăрттăн пырса çапса, тăшман оборонине чылай вырăнсенче татса кĕнĕ те халĕ хĕвеланăçнелле куçса пыраççĕ. Пĕр часть тăшманăн темиçе контратакине сирсе янă, нимĕçсен 30 танкне (вăл шутра вуннăшĕ «тигр» йышшисем) пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пĕр соединени чаçĕсем çапăçса малалла куçса пынă, нимĕçсен 1500 салтакĕпе офицерне ытла вĕлернĕ, 14 танк, 45 тупă, 86 пулемет тата 90 автомашина пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ. Вăл шутра 9 танк, 24 тупă, 142 пулемет, 13 паровоз, 600 вагон тата тĕрлĕрен çар материалĕсен 4 склачĕ пур. 250 гитлеровеца тыткăна илнĕ.

Кавалеристсен пĕр соединенийĕ, тăшмана хăваласа пырса, Кивĕ Керменчик ятлă район центрне тытса илнĕ. 80 автомашина, 11 тупă, боеприпассен складне тата продовольстви складне тытса илнĕ.

Пирĕн мотопехотăпа кавалеристсем нимĕçсем Германи каторгине хăваласа каякан 4000 совет гражданне ирĕке кăларнă.

* * *

Прилуки хули енче пирĕн çарсем çаплах малалла ăнăçлăн тапăнса пынă. Пĕр соединени боецĕсем Псел ятлă юханшыв урлă каçнă та хаяр çапăçусем хыççăн Гадяч хулине тытса илнĕ. Тепĕр соединени чаçĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, халăх пурăнакан чылай пунктсене тытса илнĕ. Çав çапăçусенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, вăл шутра 11 танк.

* * *

Нежин хули енче пĕр соединени чаçĕсем, тăшман хаяррăн хирĕç тăнине çĕнтерсе тăкса тата унăн контратакисене сире-сире ярса, çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 20 пункта ытла йышăнса илнĕ. Халăх пурăнакан пĕр пунктшăн пынă çапăçура 400 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, 6 тупă, 27 пулемет тата боеприпассен 2 складне тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн боецсем тăшман контратакине сирсе янă чухне 200 гитлеровеца вĕлернĕ тата 8 танк пĕтерсе тăкнă.

* * *

Брянск хули енче пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă. Пĕр соединени боецĕсем тăшманăн вăрманти чăрмавĕсем тата мина хурса тухнă вырăнсем урлă каçнă та çапăçса малалла куçнă. Нимĕçсем хаяррăн хирĕç тăраççĕ, анчах та пирĕн чаçсем пыра-пыра çапнине тÿсеймесĕр, пĕр позици хыççăн тепĕр позицине хăварса каялла чакаççĕ. Брянскран хĕвелтухăçнерехре совет боецĕсем Белые Берега ятлă чугун çул станцине тытса илнĕ. Тăшманăн контратакисене сирсе янă, гитлеровецсене пысăк çухатусем кÿнĕ, нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 12 тупă тата 30 автомашина пĕтерсе тăкнă. Тăшмантан 9 тупă, 7 миномет, 36 пулемет тата 3 паровоз тытса илнĕ, 190 гитлеровеца тыткăна илнĕ.

* * *

Харьковран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла куçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Пĕр соединени чаçĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтерсе пырса, нимĕç оборонин вăйлă çирĕплетнĕ узелне йышăнса илнĕ. Нимĕçсенчен 3 танк, 12 тупă, 39 пулемет тата боеприпассен складне тытса илнĕ.

* * *

Чернигов облаçĕнче кĕрешекен партизансен Чапаев ячĕпе, Пархоменко ячĕпе тата Суворов ячĕпе тăракан отрячĕсем 7 кун хушшинче нимĕçсен 14 çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. 12 паровоз тата 100 вагонпа платформа ытла çĕмĕрĕлнĕ. Запорожье облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ чугун çул кĕперне сирпĕнтерсе янă. Чугун çулăн çак участокĕнче поездсем çÿресси нумай вăхăтлăха чарăнса ларнă.

* * *

Хĕрлĕ Çар енне нимĕçсен 113-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен пĕр ушкăн салтак куçнă. Çав салтаксенчен пĕри Рудольф Д. çапла каласа панă: «113-мĕш дивизие вырăссем хĕлле Сталинград патĕнче пĕтерсе тăкрĕç. Çуркунне Францире çĕнĕ дивизи турĕç, çак дивизие çав пĕтерсе тăкнă дивизи номерне пачĕç. Июлĕн 19-мĕшĕнче дивизие Францирен илсе тухрĕç. Пирĕн полк Ярцево станцине çитрĕ, вара кунта ăна часах çапăçăва кĕртсе ячĕç. Эпир малтанхи çапăçусенчех йывăр çухатусем тÿсрĕмĕр. Салтаксем çапла калаççĕ: «Пирĕн номер те усал дивизи номерĕ, шăпи те çав усал дивизи шăпиех». Çав полкранах тарса каçнă тепĕр салтак Отто Р. çапла каласа панă: «Офицерсем пире çапла каларĕç: пирĕн дивизире çамрăк, çапăçусенче пулман салтаксем, çавăнпа та дивизи фронтра лăпкă участок йышăнса тăмалла, терĕç. Анчах та вĕсем пире улталарĕç. Вырăссен артиллерийĕ эпĕ тăракан ротăра пĕр кун хушшинчех 60 çынна вĕлерчĕ е амантрĕ. Виçĕ кун хушши çапăçсан, рота пачах пĕтсе ларчĕ».

Укерчĕк çинче: Сăръелĕнчи «Марс» колхозри (Елчĕк районĕ) 3-мĕш бригадăра «Стахановец» стена хаçачĕн çĕнĕ номерне кăлараççĕ.
Н. ДАНИЛОВ фото-ÿкерчĕкĕ.

М. И. Калинин Югослави корольне II Петра вăл çуралнă кун ячĕпе янă саламлă телеграмма

Сентябрĕн 6-мĕшĕнче Югослави королĕ II Петр çуралнă кун ячĕпе СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин ăна ырă сунса çакăн пек телеграмма янă:

«Эпĕ Эсир çуралнă кун ячĕпе Сире хăвăра тата Югославин геройлă кĕрешекен халăхне салам яратăп тата ырă сунатăп».

Югослави королĕ II Петр М. И. Калининăн саламлă телеграммине ответлесе панă телеграмма

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калининăн саламлă телеграммине хирĕç, Югослави королĕ II Петр çакăн пек телеграмма янă:

«Эсир янă саламшăн чунтан тав тăватăп, Сире хăвăра пĕтĕм чĕререн ырă сунатăп тата Сирĕн паттăр боецсене тăшмана час çĕнтерсе тăкма чунтан-чĕререн ырă сунатăп».

Совет Союзне Голланди послĕ барон К. Ван Брюгель Дуглас господин килнĕ

Сентябрĕн 11-мĕшĕнче Мускава Голландин Совет Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй послĕ барон К. Ван Брюгель Дуглас господин килнĕ.

Мускаври аэродромра барона К. Ван Брюгель Дуглас господина Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн Протоколсен отделĕн заведующийĕ Молочков юлташ хирĕç тухса илнĕ.

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариатĕнче

ВЦСПС-па пĕр Халăх Комиссариачĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăван 1943 çулхи август уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводрах хăвармалла тунă тата завода пĕрремĕш преми памалла тунă.

Хĕрлĕ Çар ячĕпе—стахановла вахта

Çĕршывăн кăмрăк промышленность районне—Донец бассейнне нимĕç захватчикĕсенчен тасатни, Конотоппа Бахмач хулисене ирĕке кăларни çинчен пĕлтерни Шупашкарти промысла артелĕсенче ĕçлекенсем хушшинче хăвăрт саралчĕ. Артельсенче ĕçлекенсем Хĕрлĕ Çара пулăшма пĕтĕм вăй-хăвата хурса ĕçлеме пулаççĕ.

«Кожупряжь» артель коллективĕ Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕсем ячĕпе стахановла вахтăна тăчĕ. Вăл виççĕмĕш кварталти плана сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне тултарассишĕн кĕрешет. «Кооператор» артель август уйăхĕнчи плана ирттерсе тултарнă. Артель коллективĕ кварталти плана срокчен тултарма сăмах пачĕ.

Хулари артельсенче ĕç нормине ирттерсе тултаракансен йышĕ кунран кун ÿсет. Халĕ ĕнтĕ кашни артельте икĕ-виçĕ норма тултаракансем вуншарăн шутланаççĕ.

Хамăран фронтри тăвансемпе тан пырас тĕс

ÇĔМĔРЛЕ. (**Хамăр корр.**). Комбинатри рабочисемпе работницăсем фронтран килекен кашни çĕнĕ хыпара тылра çитĕнÿсем тунипе ответлеме тăрăшаççĕ.

Пĕр цехри токарь Николай Посадин юлташ Сталин юлташ войскăсене саламласа панă приказ çине ответлесе куллен виçшер норма тултарма обязательство илнĕ. Çакна вăл тивĕçлипе пурнăça кĕртсе пырать. Август уйăхĕнче вăл вăтамран кашни кунах 4 норма тултарнă. Юлашки кунсенче вара кулленхи нормăна 500—560 процент таран тултарса ĕçлет.

Коммунист Яков Кондратьев, стахановецсем Кругляк, Виноградов, Никитин, Иванов юлташсем пурте илнĕ обязательствăсене ирттерсе пурнăça кĕртеççĕ. Стахановка Кругляк юлташ юлашки эрне хушшинче нормăна кашни кунах 315 процент, Кондратьев юлташ —300 процент тултараççĕ. Çамрăк рабочи Александров, иртнĕ уйăхсенче нормăна тултараймансскер, август уйăхĕн вĕçĕнче куллен икĕ норма таран тултарса пычĕ.

Рабочисемпе работницăсем тухăçлăн ĕçлени цехсен ĕçĕнче палăрать. Зимин юлташ ертсе пыракан цех коллективĕ июль уйăхĕнче плана тултарайман пулнă. Августра вара ытлашшипех тултарчĕ. Ку цехра ĕçлекенсенчен çурри ытла стахановецсем шутланаççĕ. Миронов юлташ начальник пулса ертсе пыракан цех коллективĕ çирĕп график тăрăх ĕçлесе пырать.

Чылай цехсем халĕ хăйсен ĕçне лайăхлатрĕç, плана ирттерсе тултараççĕ. Ăмăртура халĕ те Павлов юлташăн Хĕрлĕ ялавлă цехĕ малта пырать.

Х. ЛИСИН.

Агитаторсем Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсем çинчен ăнлантарса пачĕç

СĔНТĔР. Атапай ялсоветне кĕрекен «Крестьянин» тата Свердлов ячĕпе тăракан колхозсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Августăн 25-мĕшĕ тĕлне вĕсем кĕрхи тата çурхи тырăсене вырса пĕтерчĕç. Кĕске вăхăтрах государствăна тырă тата ытти парăмсене парса татрĕç. Çитес кунсенчех кĕлтесене кÿрсе капана хывса çитереççĕ.

Свердлов ячĕпе тăракан колхозра çамрăк хĕр Клавдия Ковалева бригадир пулса ĕçлет. Унăн бригади кĕрхи тырăсене пĕтĕмпех акса пĕтерчĕ.

Агитаторсем—ВЛКСМ организацин секретарĕ Ксения Ковалева тата отечественнăй вăрçă инвалидĕ Тихон Налимов ирех итем çине тухаççĕ. Вĕсем унта колхозниксене пирĕн войскăсен çĕнĕ çĕнтерĕвĕсем çинчен ăнлантарса параççĕ.

М. КАРПОВ.

КОМСОМОЛ ПУРНĂÇĔ

Малта пыракан организацире

СОВЕТСКОЕ. Комсомолăн Яккушкĕнчи «Пробуждение» колхозри пуçламĕш организацийĕ иртнĕ çулта питех те сӳрĕк ĕçлетчĕ. Ун чухне комсомолецсен йышĕ те сахалччĕ, вĕсем массă хушшинче лайăх енĕпе палăрса тăмасчĕç.

Вăрçă инваличĕ Г. Никандров, хăйне секретаре суйланă хыççăн, организаци çитменлĕхĕсене пĕтерес енĕпе тимлĕн ĕçлеме тытăнчĕ. Вăл кăçал организацири комсомолецсен йышне 7 çынтан 29 çынна çитерчĕ.

Кунпа пĕрлех комсомолецсен производствăри вырăнĕ те ӳсрĕ. Комсомолка Т. Петрова—бригадир. Унăн бригади уборкăра аван ĕлкĕрсе пынăшăн колхозри куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялава илчĕ. А. Семенова—кладовщик, И. Степанова—ферма заведующийĕ, Г. Никандров—счетовод, Г. Бармин—учетчик. Халĕ 6 çамрăк парти ретне кĕме хатĕрленсе çитрĕç.

Комсомолецсем колхоз производствинче пысăк вăй пулса тăчĕç. Вĕсем хăйсен вăйĕпех ялхуçалăх инвентарĕсене юсарĕç тата запаслă пайĕсене пухрĕç. Колхоз жнейкин чылай пайĕсем çитмесчĕç. Вĕсене, колхоз тимĕрçи Е. Измайлов пулăшнипе, çамрăксем турĕç. Жнейкăсемпе уборкăра та комсомолецсемех ĕçлерĕç. Унпа ĕçлекен Н. Леонтьев, В. Андреев тата Н. Андреев кулленех нормăна 190 проц. тултарса пычĕç.

Комсомолецсем агитаци ĕçĕпе колхозниксене çĕнĕ ӳсĕмсем тума хавхалантарчĕç. Агитбригада хиртен киле кĕме пĕлмесĕр ĕçлерĕ. Унта çĕнĕ кĕнекесем, хаçат-журналсем, патефон, радио пулчĕ, колхозри стена хаçатне 3 номер тата бригадăсенче «боевой листоксем» кăларнă.

Колхоз письмоносецĕ М. Николаева хаçатсемпе çырусене хире тухса валеçрĕ. Агитаторсенчен уйрăмăнах Г. Никандров, М. Оргалькина, В. Андронников лайăх ĕçленине палăртмалла.

Комсомолецсенчен ятарласа уйăрнă транспорт бригади малтанхи тырра 30 центнер хатĕрлев пунктне леçсе пачĕ. Ку ĕç кулленех пулса пырать.

Ĕçĕн пур участокĕсенче те комсомолецсем пур. Вĕсем хăйсен вăйĕпе общесвăллă выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма апат хатĕрлеççĕ, 45 тонна силос хывмалла пулсан, 80 тонна хывса хăварнă. Шкул ачисене пучах пуçтарас ĕçе явăçтарнă, пĕтĕмпе 412 килограмм пуçтарнă.

«Пробуждение» колхоз районра кая юлса пыракан колхоз пулнă пулсан, халĕ малти рете тухма пуçларĕ. Комсомолецсем колхоза çитменлĕхсене хăвăрт пĕтерме пулăшаççĕ.

Я. СИГАЕВ.

Комсомол райкомĕ пулăшмасть

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Комсомолăн «Четай» колхозри пуçламĕш организацийĕ хăйĕн ĕçне маннă. Уборка вăхăтĕнче агитаторсем пулса ĕçлеме уйăрса хунă комсомолецсем хут çинче çеç шутланса тăраççĕ. Агитколлектив руководителĕ коммунист К. Лоськова çакăнпа килĕшсе, вĕсене ĕçре ертсе пымасть.

ВЛКСМ организацийĕ секретарĕ Порфирьев юлташ 1943 çулта комсомолецсен пухăвне пĕрре те ирттермен. Комсомолецсем 5—6 уйăх хушши член укçисем тӳлемен.

Çак çитменлĕхсем çинчен ВЛКСМ Красноармейски райкомĕ пĕлме тивĕçлĕ. Анчах ун енчен нимĕнле пулăшу та çук.

В. ЯКОВЛЕВ.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Ĕç резервĕсен управленийĕпе ВЛКСМ Обкомĕнче

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Ĕç резервĕсен управленийĕпе ВЛКСМ Обкомĕ чугунçул училищисемпе ФЗО шкулĕсенче вĕренекенсен тата унти работниксен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн кăçалхи август уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

Шупашкарти 11-мĕш номерлĕ ФЗО шкулне (директорĕ Беляков юлташ, директорăн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ Иванова юлташ, ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ Васильева юлташ) тата **Шупашкарти 7-мĕш номерлĕ ФЗО шкулне** (директорĕ Власов юлташ, директорăн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ Магницкая юлташ, ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ Серякова юлташ) ăмăртура мала тухнă тесе йышăннă.

Кунпа пĕрлех Сĕнтĕрвăрринчи 4-мĕш номерлĕ ФЗО шкулĕ (директор ĕçĕсене тăвакане Молостовкина юлташ) ситилĕксĕр ĕçленине палăртнă.

Республика уйхирĕсенче

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ТЫРПУЛСЕНЕ ПУХСА КĔРТЕС ĔÇСЕМ СЕНТЯБРĔН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПУЛСА ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Капана хывнă	Кĕрхи тата çурхи тĕш-тырăсене çапнă	Вăрлăхлăх куккăсене пухса кĕртнĕ
Улатăр	92,7	37,2	—
Элĕк	53,8	29,9	6,7
Вăрнар	72,2	34,1	51,3
Йĕпреç	61,8	41,1	23,5
Ишлей	69,8	37,9	9,3
Калинино	66,9	29,8	10,4
Канаш	58,2	35,0	35,1
Куславкка	65,0	38,7	13,1
Комсомольски	71,1	31,4	—
Красноармейски	62,5	35,7	28,7
Хĕрлĕ Чутай	56,4	32,6	43,3
Кувакино	59,5	30,7	—
Сĕнтĕрвăрри	66,3	40,5	38,9
Октябрьски	52,4	36,1	23,3
Первомайски	45,6	27,1	—
Пăрачкав	63,6	25,6	—
Советски	67,2	33,1	37,1
Сĕнтĕр	69,5	42,1	37,8
Вăрмар	61,4	42,9	68,2
Çĕрпӳ	57,5	34,1	45,5
Шупашкар	59,6	36,7	33,0
Чкаловски	61,7	34,1	—
Шăмăршă	84,1	37,9	1,6
Шăхасан	64,7	28,4	53,1
Çĕмĕрле	77,3	46,3	14,0
Етĕрне	82,3	43,0	17,5
Елчĕк	64,4	31,8	72,1
Тăвай	40,0	21,5	23,1
Шупашкар хули	100,0	46,2	25,0
ЧАССР тăрăх	63,6	34,5	24,2
Сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне пулнă	47,5	27,6	—

* * *

Республикăри колхозсем сентябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне кĕрхи тата çурхи тырăсене 100 процентчĕпех вырса пĕтернĕ. Кувакино тата Пăрачкав районĕсенчи колхозсем халĕ те вырса пĕтермен-ха. Кувакино районĕ тырă вырас планĕ 96,5 процент, Пăрачкав районĕ 91,3 процент пурнăçланă.

Воскресник аван иртрĕ

ЕЛЧĔК, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Ĕнер, сентябрĕн 12-мĕшĕнче, комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксен воскресникĕ пысăк çĕкленӳпе иртрĕ. Государствăна тырă пама 106 комсомолецпа союзра тăман 290 çамрăк кайрĕç. Воскресникe колхозниксемпе колхозницăсем те активлăн хутшăнчĕç. Сентябрĕн 12-мĕшĕнче районри колхозсенчен Канаша тырă тиенĕ 456 лавран тăракан Хĕрлĕ обоз кайрĕ. Вĕсем пĕр кун хушшинче государствăна 1619 центнер тырă пачĕç. Государствăна тырă пама хĕрлĕ обозсем организацилес тĕлĕшпе уйрăмах «Вперед», «Сатурн» колхозсенчи комсомолецсем пысăк активлăх кăтартса ĕçлерĕç. «Вперед» колхозри 4 комсомолецпа 23 союзра тăман çамрăк 27 лавпа государствăна 92 центнер тырă леçсе пачĕç. «Сатурн» колхозра воскресник туса ирттерес тĕлĕшпе виçĕ комсомолец ĕçлерĕç. Вĕсем ертсе пынипе ялти 34 çамрăк государствăна тырă пама 37 лавлă обоз организацилерĕç.

Государствăна тырă памалли обязательствăсене срокчен пурнăçласси шĕн «Октябрь», Тимирязев ячĕпе тăракан, «Канаш» колхозсенчи комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем аван ĕçлени курăнчĕ.

С. МАКАРОВ.

Хатĕрлев пункчĕсене 31 пин центнер ытла тырă пынă

ВЛКСМ Обкомĕ йышăннă тăрăх, иртнĕ вырсарникун — сентябрĕн 12-мĕшĕнче — республикăра государствăна тырă леçес тĕлĕшпе комсомолецсемпе çамрăксен воскресникĕ пулса иртрĕ. 20 районран пĕлтернĕ тăрăх, воскресник кунĕнче çав районсенчи колхозсем обязательнăй поставкăсен шучĕпе, натуроплатăшăн тата Хĕрлĕ Çар фондне 8.999 лавпа 31.299 центнер тырă пырса панă.

Воскреснике Шăхасан, Вăрмар, Чкаловски, Комсомольски, районсенче уйрăмах ăнăçлăн иртгернĕ. Шăхасан районĕнчи колхозсем 1286 лавпа хĕрлĕ обозсем организацилесе хатĕрлев пунктне 3.818 центнер тырă леçнĕ. Çавăн пекех Вăрмар районĕнчи колхозсем — 2625 центнер, Комсомольски районри колхозсем — 2.544 центнер тырă леçсе панă.

2553 центнер тырă леçрĕмĕр

ИШЛЕЙ, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Шоссе çулĕ çине тинкерсе пăхатăн та савăнатăн: лав хыççăн лав... Хаваслă саса-юрăсем таврана янраса илтĕнеççĕ. Ĕнер, канмалли кун, колхоз çамрăкĕсем государствăна тырă леçес тĕлĕшпе массăллă воскресник ирттерчĕç. Хĕрлĕ обозсен пуçĕнче—комсомолецсем. Вĕсем çак кун хатĕрлев пунктне 951 лавпа 2553 центнер тырă леçрĕç. Çапла ĕнтĕ, паянхи куна районра 11 колхоз государствăна тырă парса татрĕç.

Воскресникре Ишек ялсоветĕнчи колхозсем 132 центнер, Анаткас Марка ялсоветĕнчи колхозсем—188 центнер, «Тимĕр Çырма» колхозĕ—24 центнер, Жданов ячĕпе тăракан колхоз—36 центнер тырă леçнĕ.

Государствăна тырă хăвăртрах парса татас тесе, эпир çитес вырсарникун, сентябрĕн 19-мĕшĕнче, татах тепĕр воскресник ирттерме шутлатпăр.

К. СЕРЕБРЯКОВА,
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ.

20 колхоз государствăна тырă парса татнă

Сентябрĕн 12-мĕшĕнче Октябрьски районри колхозсем государствăна татах 513 центнер тырă леçсе пачĕç. Комсомолецсемпе çамрăксем хастарлăн пуçарса пынипе çав кун 47 колхоз государствăна тырă пама хĕрлĕ обозсем организацилерĕç. Ĕнер «Молния», «Красный танк», «Коммунизм», «Красный борец»—пурĕ 6 колхоз государствăна тырă хатĕрлесе памалли çулталăкри плана пĕтĕмĕшпех пурнăçларĕç.

Çапла паянхи куна Октябрьски районри 75 колхозран 20-шĕ государствăна 1943 çулшăн тырă парса татрĕç.

К. ИСАЕВ,
Райуполнаркомзаг.

Хĕле хатĕрленеççĕ

ШАХАСАН. Авăспӳрт Кипечри, «Березовка» колхоз выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма лайăх хатĕрленет. Паянхи куна 60 лаша вырăнаçмалăх çĕнĕ вите тунă. Ĕнесемпе сурăхсен тата сыснасен витисене лайăх юсанă. Выльăхсем валли апат та çителĕклĕ хатĕрлесе хунă.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ КĔРХИ ТЫРАСЕНЕ АКАС ĔÇ ТАТА КĔРХИ ÇĔРТМЕ ТАВАС ĔÇ СЕНТЯБРĔН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПУЛСА ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Кĕрхи тырăсем акнă	Кĕрхи çĕртме тумалли çулталăкри плана пурнăçланă
Элĕк	111,4	4,8
Тăвай	110,1	7,2
Вăрмар	109,1	3,3
Ишлей	108,1	5,1
Етĕрне	106,9	4,1
Красноармейски	106,8	11,5
Елчĕк	106,2	6,7
Сĕнтĕрвăрри	106,1	3,3
Шупашкар	105,9	4,0
Советски	05,3	2,6
Канаш	104,8	8,1
Сĕнтĕр	104,4	5,5
Шăхасан	104,4	1,1
Калинино	104,0	5,1
Çĕрпӳ	103,5	4,9
Вăрнар	102,7	4,0
Хĕрлĕ Чутай	101,7	0,8
Октябрьски	101,2	3,2
Çĕмĕрле	100,3	1,4
Куславкка	100,1	0,2
Чкаловски	100,1	1,8
Комсомольски	100,0	2,6
Шăмăршă	99,9	1,5
Первомайски	98,9	0,4
Йĕпреç	96,2	0,6
Улатăр	82,5	—
Кувакино	76,8	—
Пăрачкав	69,9	—
Шупашкар хули	106,6	4,0
ЧАССР тăрăх	101,4	3,6
Сентябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне пулнă	93,3	—

315 комсомолец хутшăннă

КАЛИНИНО, сентябрĕн 13-мĕшĕ. (Телефонпа). Ĕнерхи воскресникре комсомолецсемпе çамрăксем 2.400 центнер тырă тата пахча-çимĕçсем леçнĕ. Вăл шутра 75 лав купăста, 45 лав çĕрулми, 25 лав махорка шутланать. Уйрăмăнах Ленин тата Калинин ячĕсемпе тăракан, «Синъял», «Коминтерн» колхозсем нумай лавсенчен хĕрлĕ обозсем организацилерĕç. Вĕсем хăйсен лавĕсем çине флагсемпе лозунгсем çакнă. Воскресникe пурĕ 315 комсомолец хутшăннă.

Н. НИКИТИН.

Итем çинче ĕç хĕрсе пырать

«Свобода» колхоз (Красноармейски район) авăн çапас ĕçе аван организациленĕ. Тырă тăккаланасран хытă сыхланаççĕ. Кĕлте кӳмелли урапасем çине хупсем сарнă, капансене каснă итем çине тăваççĕ. Капана туса пĕтернĕ хыççăн йĕри-тавра тăкăланнă тырра шăлса пуçтараççĕ.

Ултă лаша вăйĕпе ĕçлекен молотилкăпа ĕçлесе, 22 колхозник кулленех виçĕ гектар тырра çапса тасаççĕ, кĕлтесене кĕртеççĕ. Колхоз халĕ государствăна 166 центнер тырă панă. Ку вăл çулталăкри планăн 60 процентчĕ пулать.

(Хамăр корр.).

Дария Угинева ертсе пыракан колхозра

— Хĕрача çеç вĕт вăл, ăçтан пысăк колхоза ертсе пыма пултартăр,—тесе шутланă ун çинчен хăшпĕр колхозниксем.

Унтанпа икĕ çул иртнĕ. Çав вăхăт хушшинче коммунистка Дария Угинева хăйĕн пултарулăхне аванах кăтартрĕ, колхозри дисциплинăна çирĕплетрĕ. Халĕ ăна, колхозăн пултарулла руководительне, пурте хисеплеççĕ.

Иртнĕ çуркунне ĕçре пысăк йывăрлăхсем пулчĕç пулин те, Уйкас Юнтапари «Новая жизнь» колхоз планран ирттерсе 20 гектар тырă акса хăварчĕ. Халиччен усăсăр выртнă çĕрсем çине 3 пин лав ытла тислĕк кăларчĕ. Вăл участоксенче те тырă хӳхĕм çитĕнчĕ.

Кăçал пахча-çимĕçсем акмалли участока та чылай ӳстернĕ. 18 гектар çĕрулмисĕр пуçне 17,5 гектар пахча-çимĕç лартнă.

Колхозниксем кăçалхи çуракинче агротехникăллă мероприятисене тĕплĕн пурнăçа кĕртрĕç. Вырăнти удобренисене хăйăрларах тата начартарах çĕр çине тăкрĕç. Тырă вара унта ăнса пулчĕ.

Вăрçăччен колхозра ĕç вăйĕпе тĕрĕс усă курман, çавăн пирки ĕçлекенсен йышĕ те сахал пек курăннă. Ĕçчен коммунистка çав çитменлĕхсене сиййĕнчех пĕтерчĕ. Халь кашни колхозник валли килĕшӳллĕ ĕç уйăрса панă.

Халăх вăрçи кашни колхозникех хастарлăн ĕçлеме чĕнчĕ. Колхозра ĕç вăйĕ вăрçăччĕнхинчен сахалтарах, çав вăхăтрах акăнакан çĕр лаптăкĕ чылай ӳснĕ. Апла пулин те колхоз халĕ ĕç вăйĕ çителĕксĕррине туймасть. Колхоз производствинче çĕршер çын активлăн ĕçлеççĕ. Иванов колхозник, хăйĕн сывлăхĕ начарринe пăхмасăрах, икĕ çыншăн ĕçлет. Вăтă ĕнтĕ, 60 çула çитнĕ вăл. Арманта мастер пулса ĕçленипе пĕрлех, вăл колхозри ытти ĕçсене тухма та ĕлкĕрет. Кун пек колхозниксем сахал мар. Кам ĕçе тухман е кам юлса тухнă,—çавна пурте çийĕнчех пĕлеççĕ: ун çинчен курăнмалли вырăна çырса çапаççĕ.

Колхозра массăллă-ăнлантарулла ĕçе те лайăх йĕркеленĕ. Çавна пула колхоз лайăх результатсем парать. Ĕçкунĕсен минимумне колхозниксем пурте тултарнă. Кăçалхи 5—6 уйăх хушшинче А. Иванова 190 ĕçкунĕ, К. Захарова—215 ĕçкунĕ, Ф. Угинева—160 ĕçкунĕ, 60 çулхи карчăк М. Иванова—130 ĕçкунĕ тунă. Нумай вăхăт хушши ĕçлеме тухайман ватă стариксемпе карчăксем те хастарлăн ĕçлерĕç. П. Иванов, Н. Семенов тата Поляков стариксем çамрăксене кĕреплеллĕ савасемпе тырă çулма вĕрентрĕç.

Хĕрарăмсем—колхозра теп вăй пулса тăраççĕ. Вĕсен ĕçне çăмăллатас шутпа колхозра ача яслийĕ уçнă. Ачаллă колхозницăсем халĕ, ытти колхозницăсемпе танах ĕçе тухса, нормăсене ирттерсе тултараççĕ.

Иртнĕ çулсенче колхозри пур бригадăсен тыррине те пĕр çĕре капана хывнă. Çапла вара лайăх ĕçленĕ бригадăн та, начартарах ĕçленин те тырпул тухăçлăхĕ пĕр пек шутланнă. Кăçал кашни бригада хăйĕн участокĕнчи тырра уйрăм турттарать, уйрăм çапать.

Колхозра çуркуннеренпех пĕрлешӳллĕ столовăй ĕçлет. Апата уя илсе тухаççĕ. Кам мĕнле ĕçленине кура апат çитереççĕ.

Колхоз пĕтĕмпе 355 гектар тырă вырса пуçтарчĕ. 3 жнейка пĕр чарăнмасăр ĕçлерĕç. 45 çын кĕреплеллĕ çавапа çулчĕç, 30 çын çулнă тырра çыхса пычĕç. Ефросиния Яковлева, Татьяна Пятачкова колхозницăсем кĕреплеллĕ çавасемпе куллен 0,35-шер гектар ытларах çулчĕç. Хĕрсе сĕлĕ вырнипе пĕрлех 36 çын кĕлте кӳнĕ çĕрте, 4 çын капан хывнă çĕрте, 15 çын авăн çапнă çĕрте ĕçлерĕç.

Государствăна кĕске срокра тырă парса татас тесе, колхозра 22 çынтан транспорт бригади тунă. Кунта халĕ кунсеренех хĕрлĕ обозсем организацилесе, хатĕрлев пунктне тырă леçеççĕ.

С. ШАДИН,
КАЛИНИНО. («Чăваш Коммуни» корр.).

Пирĕн авиаци Гомель, Нежин, Красноград, Верхнетокмак чугун çул узелĕсене тапăнни

Сентябрĕн 11-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн авиаци Гомель, Нежин, Красноград, Верхнетокмак чугун çул узелĕсенче нимĕçсен пĕр çĕре пухăнса тăнă çар эшелонĕсем çине тата тăшманăн çар склачĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнипе пула темиçе эшелон çĕмĕрĕлсе кайнă. Пушарсем нумай тухнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

Пирĕн пĕр самолет хăйĕн базине таврăнман.

Ют çĕршывсенче

Италипе тунă перемири условийĕсем

ЛОНДОН, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: паян Лондонра Италипе тунă перемири условийĕсен текстне пичетлесе кăларнă.

Перемири условийĕсенче çапла каланă: Италин хĕçпăшаллă вăйĕсем халех вăрçма чарăнаççĕ; Корсика утравĕ тата Итали материкĕпе утравĕсен пĕтĕм территорийĕ парăнать, вĕсем союзниксен аллине куçаççĕ, союзниксем вĕсемпе вăрçă ĕçĕсенче тата ытти ĕçсенче усă кураççĕ; Итали флочĕпе авиацийĕ союзниксен войскисен главнокомандующийĕ кăтартса панă пунктсене каяççĕ, Италин хĕçпăшаллă вăйĕсем пур районсенчен те Италие таврăнаççĕ, вĕсем вара çак вăрçа пĕртте хутшăнмаççĕ.

Перемири условийĕсем тăрăх, Италин нимĕçсене союзниксемпе кĕрешме нимĕнле май та памалла мар.

Союзниксене Итали территорийĕнчи мĕнпур аэродромсемпе тата тинĕс-çар порчĕсемпе усă курма памалла.

Перемири условийĕсем тăрăх, союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ союзлă нацисен вăрçă интересĕсемшĕн Итали территорийĕн хăш-хăш пайĕнче правительствăн çар администрацине тума кирлĕ тесе шутлать, çавăнта вăл çавăн пек администраци туса хурать. Главнокомандующин Италин хĕçпăшаллă вăйĕсене мĕнле майпа хĕçпăшалсăрлатмаллине, салатса ямаллине тата вăрçă йĕркинчен кăлармаллине кăтартса парать тата хăй тума шутланă ĕçсене кирек мĕнлисене те тума пултарать.

Пĕрлешӳллĕ нацисен тыткăна лекнĕ тата интернировани йĕркипе тытса тăракан мĕнпур çыннисене главнокомандующи аллине памалла.

Икĕ енĕ те алă пуснă текстра çапла каланă: «Политика, экономика тата финанс тĕлĕшпе Итали мĕнле условисене пăхăнмаллине каярахпа кăтартса параççĕ», тенĕ.

Бадольо тата король Итали халăхне чĕнсе калани

ЛОНДОН, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Сентябрĕн 11-мĕшĕнче паллăмар радиостанци Итали халăхне Бадольо маршал чĕнсе каланин текстне панă. Бадольо çакна асăрхаттарнă: эпĕ Италин хĕçпăшаллă вăйĕсене союзниксен çарĕсене хирĕç тăма чарăнма хушрăм, çав вăхăтрах эпĕ вĕсене кирек хăш ытти çĕршыв çарĕсем тăвакан атакăсене те хирĕç тăма хушрăм, тенĕ. Çав радиостанци тата Итали королĕ чĕнсе каланă текста та панă. Унта король хăй правительствăпа тата аслă çар влаçĕсемпе пĕрле Римран Италин урăх пунктне тухса кайни çинчен пĕлтерет.

БРИТАНИ ТРЕД-ЮНИОНĔСЕН 75-МĔШ КОНГРЕСĔНЧЕ ШВЕРНИК ЮЛТАШ СĂМАХ ТУХСА КАЛАНИ

ЛОНДОН, сентябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Сентябрĕн 8-мĕшĕнче Британи тред-юнионĕсен 75-мĕш конгресĕнче Шверник юлташ сăмах тухса каланă.

Шверник юлташ 26 уйăх хушшинче совет халăхĕпе унăн паттăр Хĕрлĕ Çарĕ гитлерла Германие тата унпа пĕр каварлисене хирĕç кĕрешни çинчен пĕтĕçтерсе каласа панă.

Шверник юлташ Хĕрлĕ Çарăн çапăçури хăватне ӳстерессишĕн кĕрешнĕ çĕрте совет тылĕ тата совет профсоюзĕсем пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен каланă.

Унтан Шверник юлташ Совет Союзĕ гитлерла Германие хирĕç кĕрешни çинчен выводсем туса панă.

«Халĕ ыйту çакăн пек тăрать,— тенĕ Шверник юлташ:—союзниксем Европа континентĕнче хăçан наступлени тума пуçланинчен Гитлера çĕнтерессе тата вăрçă хăçан пĕтесси килет. Урăхла каласан, Европа континентĕнче иккĕмĕш фронта мĕн чухлĕ хăвăртрах уçĕç, вăрçă та çавăн чухлĕ хăвăртрах пĕтĕ, çапла вара Гитлера хирĕçле коалицин жертвисем те ытларах чакĕç».

Юлашкинчен Шверник юлташ Англипе совет профсоюзĕсен комитечĕн задачисем çинчен каласа панă.

Шверник юлташ сăмах каланă чухне çынсем темиçе хут та алă çупнă тата «тĕрĕс» тесе кăшкăрнă. Шверник юлташ хăйĕн сăмахне пĕтернĕ чухне конгрес членĕсем тăвăллăн алă çупнă тата «ура» кăшкăрнă.

ИТАЛИРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, сентябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германири радио Америка войскисем Сорренто çурутравĕ çине пырса кĕни çинчен пĕлтернĕ.

Рейтер агентствин тепĕр пĕлтерĕвĕнче çакна кăтартса панă: Америкăпа Англи чаçĕсенчен тăракан 5-мĕш армие Неаполь районĕнче нимĕçсем вăйлăн хирĕç тăраççĕ. Кунта 5-мĕш арми тăшманăн пилĕк контратакине сирсе янă.

Кăнтăр Италире Англин 8-мĕш армийĕ чылаях малалла куçнă. 8-мĕш армийĕн Ниццо сывăхĕнче нимĕçсен тылне пырса аннă чаçĕсем хĕвеланăç çыранĕ тăрăх пыракан тĕп вăйсемпе пĕрлешнĕ.

Англин 8-мĕш армийĕн чаçĕсем, çурçĕр еннелле куçса пырса, Катандзаро тата Сан-Эвфемия ла Мазия ятлă вырăнсене тытса илнĕ.

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Германи командованийĕ çапла пĕлтернĕ: Италин Рим сывăхĕнчи 2 танковăй тата 5 пехотнăй дивизийĕнчен тăракан соединенийĕсем нимĕçсене парăннă.

Паян Германи войскисем Милана, Турина, Падуйăна пырса кĕнĕ

Пĕлтерӳ

Сентябрĕн 14-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашски ур., 6) ушкăнлă консультаци пулать. Консультаци теми: «Кĕнекене мĕнле вуламалла».

Консультацие Дунаевский юлташ ирттерет.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЭЛЕКТРИЧЕСТВО ПРОМЫШЛЕННОÇĔН ХАЛĂХ КОМИССАРИАЧĔН ГОРЬКИРИ ЭЛЕКТРОТЕХНИКА ТЕХНИКУМĔН КАÇХИ ФИЛИАЛĔ 1-мĕш, 2-мĕш тата 3-мĕш курсене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Техникумра производствăри ĕçе пăрахмасăрах вĕренеççĕ.

Техникум çак специальноçсене пĕлекен техниксене вĕрентсе кăларать: касса тата хĕссе сивĕлле ĕçлекен техник-технологсем тата аппаратсем тăвакан техник-электриксем.

Техникума кирек миçе çултисене те илеççĕ. Пĕлӳ тĕлĕшпе вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнă чухлĕ пĕлмелле.

Вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен 1941-мĕш, 1942-мĕш тата 1943-мĕш çулсенче „отлично“ тата „хорошо“ паллăсемпе вĕренсе тухнисене техникума экзаменсĕрах илеççĕ.

Вăтам шкулăн 9-мĕш е 10-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисене 2-мĕш курса илеççĕ.

Экзаменра ыйтакан предметсем тăрăх техникумра консультаци пулать.

Вĕрентнĕшĕн çулталăкра 75 тенкĕ укçа тӳлемелле.

Заявленисене сентябрĕн 15-мĕшĕччен кăна илеççĕ, çак кунсенче 18 сехетпе 20 сехет хушшинче пырса памалла: тунтикун, ытларикун, кĕçнерникун тата эрнекун.

Вĕренме октябрĕн 1-мĕшĕнче пуçлаççĕ.

Техникум филиалĕн адресĕ çапла: гор. Чебоксары, Ярославская, 54, (4-мĕш №-лĕ шкул çуртĕ).

СССР НАРКОМЗАГĔН МУСКАВРИ ЗООТЕХНИКУМĔ техникумра вĕренес текенсене илесси çинчен пĕлтерет.

15 çултан пуçласа 30 çула çитнисене йышăнаççĕ. 1-мĕш курса кĕрес текенсен вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнă чухлĕ пĕлмелле, 2-мĕш курса кĕрес текенсен вăтам шкулăн 9-мĕш е 10-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнă чухлĕ пĕлмелле.

Зоотехникум çак специальноçсене пĕлекенсене хатĕрлет: тискер кайăксене ĕрчетме тата ухута ĕçне пĕлекенсене, 2) мамăклă тирсене тата сăранпа çăм чĕр таварĕсене пĕлсе тăракансене.

Техникумра 3 çул вĕренмелле.

Заявленисене çак сентябрь уйăхĕн 20-мĕш числиччен йышăнаççĕ.

Техникумăн общежитипе столовăй пур.

Вĕренме кĕрес текенсем зоотехникум директорĕ ячĕпе çак документсене ямалла: 1) автобиографи, 2) вĕренни çинчен калакан свидетельство 3) хăçан çурални çинчен пĕлтерекен свидетельство, 4) сывлăх çинчен калакан справка, 5) çар тĕлĕшпе мĕнле тăнине пĕлтерекен справка (военнообязаннăйсемшĕн кăна).

Зоотехникум адресĕ çапла: гор. Балашиха, Московской области, Московский Зоотехникум Наркомзага СССР

2—1.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 231 Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. л.